**Ташă**

Лар-ха купăс калама,
Эп пĕлетĕп ташлама,
Петĕр ларчĕ сак çине,
Тытрĕ пĕчĕк купçсне
Пусрĕ Петĕр пĕр енчен,
Хулăм сасă. Бас иккен.
Пусрĕ тепĕр пĕрнипе,
Лекрĕ пĕчĕк саслине.

Купăс лайăх никлетет,
Кам ташлас тет, атшлăр тет.
Тухрăм сикрĕм, тăрăстик!
Чарчĕ Петĕр, «Чим, ан сик,
Ман ура çĕре лекмест,
Купăсçа ку килĕшмест.
Янкăс çемĕ Калама
Урапа та тапмалла.
Мĕн тăвас, итлес пулать,
Купăсçă чăнне калать.
Лартăмăр ури айне
Пĕчĕк Оля пуканне,
– Ну, тап!
Тап, ташлап.
Кĕвви пултăр чăвашла,
Ташши пултăр кулăшла.
Тап, тап, татах тап,
Эп маттур артист пулап.

*Алентей, В. Ташă : [сăвă] / В. Алентей // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. – С. 169.*